И. Н. Юркин.

# ХУЛАРИ

## КИВӖ МАСАР ҪИНҪЕ.

Хакӗ 30 пус.

СИМБИРСК.
Типо-литография Совета № 3.
1918.

Обязательный экземпляр
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатой
№

## ХУЛАРИ КИВӖ МАСАР ҪИНҔЕ.

Еппӗ хулари кивӗ масар (ҫӑва) ҫинҔе пӑхкаласа ҫӳретӗп. Ӑҫта пӑхнӑ унта куҫа тарӑн шӑтӑксем, лупашкасем, тӗмескесем анҔах курӑнса тӑраҫҫӗ. Пур ҫӗрте те ҫӑпата кантӑри таран хӑйах пек, йемӗешӗл курӑк ӳсет. Хӑш-хӑш тӗлте тата сайра пӗре, ӑҫта шӑтӑксенҔе, ӑҫта тӗмескесем ҫинҔе, ниҫта йурӑхсӑр кивӗ акартсисем, ҫӗмӗрт йывӑҫсем, сыренсем, тахҫан хуҫкаланса пӗтнисем, тепле килпетсӗр саркаланса ӳсеҫҫӗ. Хӑш-хӑш тӗлте тата тӗрлӗ паметниксенҔен йулнӑ тӗрлӗ тӗслӗ Ҕул катӑкӗсем, хӑшӗ йӑваланса выртаҫҫӗ, хӑшӗ тепле хӑйаккӑнлӑ-мӗнлӗ тирӗнсе лараҫҫӗ. Пӗр катӑкӗ пӗр тӗлте, тепӗр катӑкӗ те-

пĕр тĕлте. Масар шăтăкне йăванса ўкнисенĕн çырăвĕсем те курăнми пулнă. Вăл ҫулсене ĕлĕк камсем çине лартнине пĕлес тесен, халĕ пĕрте пĕлме те хаҫ çук. Вĕсем çине тăпра, тусан пусвă пирки, курăксем йешерсе ўсеççĕ. Хăш-хăш шăтăкĕсенҫе ҫукунтан тунă хĕрессемпе ĕрешетке çĕмĕрĕкĕсем ванса выртнисем курăнса тăраççĕ. Кирпĕçсенҫен тунă йапаласем тахçан ишĕлсе анса, ванса пĕтнĕ. Кирпĕçĕсем çĕрсе хăйăрланса тусан пек пулнă. Масар çине выҫăх-ҫĕрлĕхсем таптаса çўрессрен, йăри тавра хўме тытса çавăрнă.

Çак масар çинҫе ĕлĕк, епир мĕн астăвасса, мĕн ҫухлĕ йывăç хĕрессем, тĕрлĕ илемлĕ хаклă ҫулсенҫен туса лартнă аван паметниксемҫĕ? Епир вĕсене йепле ҫулсенҫен, йепле илемлĕ туннисене, вĕсем çине ылттăнпа çырнă çырăвĕсене, ытараймасăр пăхса тăрса, вуласа çўреттĕмĕр. Аван хĕрессем, аван паметниксем çинҫи çырăвĕсене вуласан, хăшне кам çине лартнине пĕлеттĕмĕр. Ăçта кайса пĕтнĕ-ши халĕ çав йапаласем?.... Пĕри-пĕр кунта куçа курăнмас-çке?!.. Йывăçран туса лартнă хĕрессем, паллă, çĕрсе пĕтрĕç пулĕ. Тимĕрсенҫен,

ҫукунсенҫен туннисене ҫӗмӗрсе пӗтерҫӗҫ пулӗ.... Ӑҫта кайса пӗтнӗши хай ӗлӗк епир курнӑ пит хаклӑ, пит таса, пит тӗреклӗ мӑрамӑрсенҫен туса лартнӑ, ытла илемлӗ паметниксем?... Пире пулсан, вӑл йапаласем ӗмӗр ӗмӗрне ҫаккӑнта ларса тӑрас пек, курӑнса тӑратҫӗҫӗ!... Халӗ вӗсенӗн кӗлеткисем мар, йӗрӗсем те вырӑнӗсем те пӗрте паллӑ мар. Кам усалӗ весене кунта хирсе пӗтерсе ҫӳренӗши?.... Аҫа ҫапса пӗтернӗ пулсан, унта та пӗри анҫах саланса пӗтнӗ пулӗҫӗ, ыттисем йулӗҫӗҫӗ. Кунта пӗри мар, епир курнисенҫен нихӑшӗ те куҫа курӑнса лармас-ҫке?!... Унта кунта выртkаласа ҫӳрекен ҫул катӑкӗсем, пӗр йӗркесӗр выртаканнисем, вӗсенӗн катӑкӗсем пек те мар. Вӗсем ӑҫта кайса пӗтнине кунта халӗ никамран ыйтса пӗлме. Пӗтӗм масар ҫийӗ тепле лӑпкӑланнӑ, сасӑ-ҫӗвӗ ҫук. Ӗлӗк ҫак масар ҫийӗ, вилнӗ ҫынсем ҫине лартса тултарнӑ хӗрессенҫен, вӑрманти ҫӑтлӑх пек, курӑнса тӑраканскер, халӗ пуш-пушӑ тӑрса йулнӑ, тепле пӑхса тӑма та куҫа киҫем туйӑнат. Ӑсран та каймалла. Ӗмӗр пӗтмӗ тенӗ йапаласенҫен пӗр йапала та тӑрса йулман....

Унтан çак масар çине вилнĕ сынсене пытарнă вăхăтра, йĕрсе, мĕн ҫухлĕ вĕри куç-çулли тăкнă пулĕ?!... Ҫăнласах та кам йĕментĕр кунта тăванĕсене пытарма илсе килсен?!... Ашшĕ амăшĕ йуратнă аҫипăҫисемшĕн йĕрсе супнă пулĕ. Аҫисем ашшĕпе амăшшĕн. Арăмĕсем упăшкисемшĕн, упăшкисем йуратнă арăмĕсемшĕн. Тăвансем-тăваншăн, хурăнташсем-хурăнташшăн. Пĕлекен тус йышĕсем, пĕлекен тусĕсемшĕн. Пурте темĕн пек йĕнĕ пулас. Пурте кунта масар шăтăкне ҫикнĕ ҫухне ҫи йулашкинҫен ĕмĕрне манас марҫĕ, тесе, курса йулма тăрăшнă.—„Турă сана хăйĕн çӳлти патшалăхне кӳрттĕр!“ тесе, асăнса, йĕрсе те пулин, виллисем çине пĕрер ывçă тăпра ывăтнă.... Кунта пытарнă пулас: пурнете вырăнти сынсене, аслисене, кĕçĕннисене, ҫаплисене, ҫапсăррисене, пуйаннисене, йурлисене, хуçасене, хĕресҫенсене, салтаксене, ваттисене, çамрăккисене, пурнете кӳрсе пытарнă, пурнете вырăнаçтарнă.... Сыв ҫухне пуйаннисем, пысăк вырăнтисем, патша çурҫĕсем пек, лайăх çуртсенҫе пурăнса, тутлă çимĕçсем çисе, хаклă ерехсем ĕççе, лайăх тумсем тăхăнса, ҫу-

нёсене иртёнтерсе, кӑмӑлёсене выҫатса, асса пурӑнҫӗҫтӗр?!.. Укҫисемпе вилӗмрен хӑтӑлас пек. шеллесе, ҫук ҫынсене пулӑшас тӗлтен, асӗсене те илмерӗҫтӗр.... Хӑйсенҫен кӗҫӗн ҫынсене, йурлисене, вӗсем пек пуласса сунмасӑр, сума та сумарӗҫтӗр.... Халӗ акӑ вӗсене кунта кӳрсе вырттарсан, пурте вӗсем ҫуккисемпе пӗр тан пулнӑ иккен.... Пурнете вӗсене ёмӗр-ёмӗрне лӑпланса выртма хушнӑ.... Тӗрлӗ майпа пуҫтарнӑ мулӗсем нихӑшне те вилӗмрен ҫӑлман....

Халӗ астӑватӑп: ӗлӗк ҫак масар ҫинҫе ҫапла хӗрессем ҫинҫи ҫырусене вуласа ҫӳренӗ ҫухне пире пӗр шап-шурӑ ҫӳҫлӗ-сухаллӑ ват старик тӗл пулсатҫӗ. Вӑл та ҫапла пирӗн пек, курса ҫӳретҫӗ пулас?!.. Мӗшӗн тесен, аван паметниксене курсан, вӗсем умне ҫарӑнса, вӗсем ҫине ытараймасӑр пӑхса тӑратҫӗ; вӗсенӗн ҫырӑвӗсене вулатҫӗ. Епир те ун патне пытӑмӑр. Вӑл пӑхса тӑракан паметник ҫинҫи ҫырӑвӗсене вула пуҫларӑмӑр. Вӑл пайтахҫен ҫав паметник умӗнҫен каймасӑр пӑхса тӑнӑран, епир ҫав паметнике унӑн тӑванӗсем ҫине лартманши? тесе, пӗлесшӗн пултӑмӑр. Хай

шап-шурă ват старик, кайас уммĕн куран, кăшт сăхсăхса илҭĕ. Епир айван аҭа-пăҭасем, унтан:

— Асатте, унта сирĕн хурăнташра пытарнăимĕн? тесе, йăвашшăн кăна ыйтса пĕлтĕмĕр.

— Ҫук, аҭамсем, терĕ вăл та пире хирĕҫ, тепле йывăррăн кăна сывласа илсе.

— Сăх-сăхса илтĕн-ҫке? терĕмĕр.

— Вăл ҫынна сыв ҭухне епĕ пĕлеттĕм, терĕ, вăл та пире хирĕҫ.

— Вăл ҫын пит пуйанҭи—мĕн? Ун ҫине апла пит ĕлккен мăрамăртан тунă паметник лартнă? терĕмĕр.

— Вăл пирĕн пекех ҫук ҫын аҭи-ҭĕ, ўссе ҫитсен, сасартăк тепле пуйса кайрĕ. Вăл йепле пуйни ҫинҭен вăл вăхăтра пит усал хыпарсем пулкаларĕҫĕ: ҫынна пусса укҫисене вăрласа тухнă та текелесе калаҫрĕҫĕ. Те тĕрĕс пулҭĕ, темĕн ĕнтĕ, ҫын сăмахĕ. Вăл йепле пуйни ҫинҭен пĕр Турă анҭах пĕлет. Пуйрĕ те авă, вилсен, ун ҫине аҭисем йепле ырă паметник лартрĕҫĕ. Хăй ытти ҫынсем пек, ĕҫлесе пурăннă пулсан, аҭи-пăҭисем ун ҫине

йывăç хĕрес те лартас çукҫĕ.... Вилнĕ çынна çын сăмахĕсемпе кăлăхах тăрăхласа калаçнă-шăн, хама Турă каçартăр, тесе, тата тепĕр хут сăхсăхса илҫĕ те малалла ута пуçларĕ. Епир те ун хыçĕнҫен утрăмăр. Тепĕр ырă паметник умне ҫарăнсан, ун çинҫи çыруне вуласа кăларҫĕ. Епир те, путексем пек, ҫасах паметник йăри тавра пăхса çаврăнтăмăр-та ун çинҫи çыруне вуласа кăлартăмăр. Хамăр вăл тата мĕн каласса итлесе тăра пуçларăмăр.

— Акă, терĕ, хай ват старик, йăвашшăн кăна... Çак паметник айне епĕ пĕлекен çынна пытарнă иккен, терĕ.

Епир те унтан:

— Вăл йепле çынҫĕ? тесе, ыйтрăмăр каллех.

— Ун çинҫен, аҫамсем, манран ан ыйтăр та, терĕ, каллех çапла тепле йывăррăн сывласа илсе.

Вăл апла каласан, епир те тĕлĕнсе ун куçĕсенҫен ҫăрр пăхса тăра пуçларăмăр. Нумай та тăмарăмăр, хай, кăлкан пек, ҫăлт шурă старик, тытăнҫĕ пире ун çинҫен те çапла каласа пама.

— Кураттăр авă, мĕн çырнине? Унта авă йанăрала пытарнă. Вăл çынпа епир пĕр вăхăтра слушит тусаттăмăр. Вăл манран пăртак çамрăкрахҫĕ. Ун çинҫен сире калам. Çав çын тĕк-тăмал çын аҫиҫĕ, йанăрал аҫи марҫĕ. Вăл йанăрала йепле тухнине сире каласа парсан, есир çамрăк çынсем, ăна-кăна пĕлместĕр халĕ. Çав çын пăртак çырăва вĕренкелесен, тепле масарла пĕр вырăна кĕрсе ларҫĕ. Çав вырăн та слушит туса пурăннă ҫухне, тытăнҫĕ хăйĕн йулташĕсем çинҫен, хăнҫен аслă тӳрисене çапла та капла, тесе, елеклесе каласа пама. Тӳрисем ăна вăл мĕн каланнине шанҫĕçĕ. Ăна уншăн йуратрĕçĕ. Вăл вара тата çапла ѣĕсене сăмах çитерe пуçларĕ. Лешсем ăна уншăн пысăктарах вырăна кӳртсе лартрĕçĕ. Вăл унĕçемĕн йулташĕсем çинҫен илĕртсе калаçатҫĕ. Хăй ĕмĕрĕнҫе миçе йулташне елеклесе вырăнĕсенҫен кăлара-кăлара йаҫĕ пулĕ?.... Миçе çынна çăкăрсăр тăратса хăварҫĕ пулĕ?!.... Унтан тата хăне парăнса тăракан çынсенҫен, тĕрлĕ майпа, хăне валли вăрттăн мĕн ҫухле укçа пуçтарҫĕ пулĕ?... Иалан епĕ сире ырă тăватăп тетҫĕ. Нумай-

ăшне, пархатарсăр йапала, ырă турĕ пуласǐ.... Укçаран тăрана пĕлмерĕ. Халĕ ёнтĕ кунта-килсе выртсан, тăранҫĕ пулĕ. Ун çинҫен пĕр Турă анҫах пĕлет пулĕ. Капла пуласса сунмарĕ куран, мĕскĕн, йалан айăпсăр лайăх çынсем çинҫен вăл çапла та ку капла, сирĕн çинҫен çапла усал сăмахсем калаçат, тесе, сăмахсем çитеретҫĕ. Лешсем унăн сăмахне итлесе, ҫăна хурса, усал тенĕ çыннисене ҫасах пыҙҫăкпа варласа йанă пек, ниçта йурăхсăр туса, хуратса йаратҫĕçĕ. Авă çав усал ĕçсемшĕн вăл, ҫасах ырă çын пулса, малтан малалла пысăк çын пулса пыҫĕ. Йанăрал пулсан, авă вăл та вилнĕ иккен, терĕ, тĕлĕнсе. Вăл çапла хăй пĕлекен çынсем çинҫен мĕн пĕлнине каласа панни, пире пит кăмăла килҫĕ. Çавăнпа епир, аҫасем, ун хыçĕнҫен йулмасăр çӳретпĕр. Тепĕр паметник умне ҫарăнсан, хай старик, каллех сăхсăхса илҫĕ. Кăна та кам çине лартнине пĕлет пулĕ, вăл йепле çын пулнине каласа паннине итлесе тăрар халĕ, тесе, епир те ҫарăнтăмăр.

— Акă çакă та пархатарсăр çынҫĕ. Ку миçе çынна тĕрмене кӳртсе лартрĕ пулĕǐ.... Хăй вăл хĕрлĕ таварсемпе суту—илӳ тăватҫĕ.

Ытти сынсем те хӑй пек хӗрлӗ таварсемпе сут тӑвакан ҫынсем, панкӑрут пулма шухӑшласан, вӗсенӗн таварӗсене пурне те хӑй патне леҫтеретчӗ. Вӗсенӗн килӗ-ҫуртӗсене хӑне сутнӑ туса хут ҫыртаратчӗ. Апла-капла пулсан, Мускав хуҫисем панкӑрут пулнӑ ҫыннисем патне укҫашӑн килсен, нимӗн те илеймесчӗҫӗ. Лавкисенче таварсем пулмасчӗ, калле нимӗн илмечӗ. Ҫуртӗсем сутӑннӑ пулатчӗҫӗ. Нимӗн тума аптӑраса, панкӑрут пулнӑ ҫыннисене тӗрмене хуптарса хӑваратчӗҫӗ. Ку вӗсенӗн килӗ-ҫуртӗсене, таварӗсене пурне те хӑне илетчӗ. Кайран тунатчӗ.... Лешсем, мӗскӗнсем, тӗрмере ларнӑ ҫыннисем, тӗрмерен тухсан, нимӗнсӗр тӑрса йулнине курсан, намӑсран, хӑйсем ҫине аллисене хуратчӗҫӗ.... Хӑшӗ наркӑмӑш ҫисе вилетчӗҫӗ, хӑшӗ ҫакӑнса, хӑшӗ шыва кайса, пӗтетчӗҫӗ.... Пайтах ҫынна вӑл кунта, масар ҫине, ӑсатрӗ пулас. Курӑсӑн, хӑй те вӗсем патне килсе выртнӑ иккен, мӗскӗн, айван йапала. Калама та ҫук, хӑй ӗмӗрӗнче вӑл пархатарсӑр ҫын пулса пурӑнчӗ, ҫавӑнпа пуйрӗ. Турӑ умӗнче вӑл йепле утвитне парӗши?.... Халӗ ӑна та авӑ пушӑ пуҫлӑ

ухмах аҫисем, хулара пуҫĕсене каҫăртса ҫӳрекеннисем, ҫапла сынсем ҫине асăнмалăх лартнă пек, пит ырă паметник лартнă иккен. Унăн паметникне курсан, йе йатне илтсен, ăна мухтакан сын пулас ҫук. Пурте ăна усал сунăҫĕ.... Сыв ҫухне вăл пуҫне ҫăлма хăш-хăш тĕле укҫасем те паркалам пек, пулҫĕ; анҫах вăл укҫисемпе те ҫăлăнайĕ, темĕн ҫав?... терĕ.

Унтан ик-виҫ хăлаҫ кайсан, тата тепĕр илемлĕ паметник куртăмăр. Ун ҫинҫи ҫырун° те ҫасах вуласа илтĕмĕр.

— Акă, кута хулара пуйан пулса пурăнҫĕ. Вăл йепле пуйни пурне те паллă пулҫĕ.

— Йепле пуйсатҫĕ? тесе, ыйтрăмăр епир те каллех, хăйуларах пулса.

— Йепле пуйасси мĕнĕ, терĕ пăртак кулса,—ĕлĕк вăл кивĕ йапаласемпе: кивĕ шаласемпе, кивĕ йĕмсемпе сут тукаларĕ. Унтан сасартăк пуйса кайрĕ: имеяисем, хаприксем, савăтсем илме тытăнҫĕ. Пуринҫен те аван пурăна пуҫларĕ. Унтан пурте шарт! тĕлĕнетҫĕҫĕ. Халăх вăл ăҫтан пуйнине те ҫасах пĕлсе ҫитрĕ: хăвалҫшивый хут укҫасем салатса пурăннипе пуйса кайнă. Хаприксем валли ҫи-

пирте тӗрлӗ ҫӑмсем пуҫтарса ҫӳренӗ ҭухне тӗттӗм ҫынсене, ҭӑн укҫа вырӑнне, йурӑхсӑр хут укҫасем тыттарса ҫӳренӗ имӗш. Тытма та хӑтланҭӗҫӗ, укҫисене пӗр салатса пӗтерсен, вӗсем сана тыттараҫҫи халӗ? Ун пек йурӑхсӑр укҫасем хӑйсем ҫумӗнҭе ҫук ҭухне вӗсене менкӗ шыра!.... Ун пек укҫасене вӗсем хӑйсем патӗнҭе усраҫҫӗ-и?.... Вӗсем ухмах мар! Кун ҫине те авӑ аҭисем йепле тӗлӗнмелле ырӑ паметник лартнӑ. Тытӑннӑ пулсан, тимӗр тӑлӑпа таҫта ҭанкӑрӑтаттарса ҫӳренӗ пулӗҭӗ. Тынмарӗ те авӑ сыв ҭухне кунта реҫинавый шынсемпе, аван каҭаскасемпе, аван лашсемпе ларса ҫӳрерӗ. Пурте ӑна, укҫине пула, тайӑлса пуҫҫапса ҫӗлӗк илетҭӗҫӗ.... Турӑ пӗлет пулӗ, ӗнтӗ, кунти лайӑх паметниксене йепле ҫынсем ҫине лартнисене. Вӗсене туса лартасса лартнӑ та анҭах тӗнҭере пурӑннӑ ҭухне лайӑх ӗҫҫем туса пурӑннӑшӑн, ӗмӗр-ӗмӗрне асӑнса тӑмалӑх, халӑх йуратса лартман. Вӗсене ашшӗсем сыв ҭухне хушша хӑварнӑ пирки, аҭисем йунпа варланнӑ укҫисене шеллемесӗр, ҫав укҫисемпе тӑва-тӑва лартнӑ. Вӗсенӗн, усалсенӗн, шӑмми-шаккисем те выртнӑ ҫӗрте ҫӗрсе

саланса пётитҫен, лайăх паметникĕсенҫен пĕр ҫул катăкĕ те йулас ҫук.... Тĕнҫере тарпа ĕҫлесе туман укҫасемпе тунă йапаласем нумайа пымаҫҫĕ, кĕсем те ҫапла малашне нумайа пымĕҫĕ, ҫас пĕтĕҫĕ, терĕ те сукмак тăрăх, пуҫне сĕнксе малалла ута пуҫларĕ. Пĕр йывăҫ хĕресе, наҫаррине курсан, унăн ҫыруне вуласа илсен, унăн умне те ҫарăнса:

— Ку та, мĕскĕн, кунта выртат иккен, тесе, шеллесе сăх-сăхса илҫĕ.

— Акă, ҫак ҫын, пит аван ҫынҫĕ. Ку ҫын ҫын татăкне, ҫын аллинҫен ирĕксĕр туртса илмерĕ пулĕ. Ыйтсан хăй татăкне ҫынна паратҫĕ, шеллӳ мĕнĕ, мĕскĕнĕн, ҫукҫĕ. Турă ăна ман пек, вăрăм ĕмĕрлĕ турĕ, шапшурă ҫӳҫлĕ сухалла пулсатҫĕ. Унăн аҫи-пăҫисемте хулара пит аван ҫынсем пулса пурăнаҫҫĕ: Турăран хăраҫҫĕ, етемрен вăтанаҫҫĕ, тӳрешарана парăнса тăма йуратаҫҫĕ.... Вĕсем тĕлĕшĕнҫен епĕ кунта тата пĕр-икĕ ҫĕр ҫул пурăнсан та нимĕн усал сăмах илтес ҫук. Авă ҫипер ҫын ҫине, мĕскĕн ҫине, йывăҫ хĕрес анҫах лартнă иккен. Йывăҫ хĕрес лартнă пулсанта ун ҫинҫен авă ырă сăмах калатăн. Ăна

пытарнине пĕлмешкĕн, хĕресĕ çумне, шăвăç татăкĕ çине, унăн йатне çырса хунă:—„унăн хĕресĕ çинҫи çырăва вулакан, унăн йатне асăнакан çын, уншăн Турра кĕл тăвăр! Унăн çылăхлă ҫунне Турă каçартăр. Ăна хăйĕн çӳлти патшалăхне кӳрттĕр!“ тенĕ. Ун пек ырă çыншăн, мĕшĕн кĕл тăвас мар? Уншăн пурте кĕл тăвĕçĕ. Атăр епир те уншăн кĕл тăвар? тесе, сăхсăхса илҫĕ. Ăна курмах епир те, пĕҫĕкçĕ аҫасем пулсанта, пурсăмăрта ҫасах Турра кĕл туса, сăхсăхса илтĕмĕр. Епир те çав çыншăн çапла сăхсăхса илнине курсан,—атăр халĕ тата малалла, терĕ. Епир каллех ун хыçĕнҫен кăпăртатса утрăмăр. Тепĕр тĕле ҫарăнсан, унта-кунта çаврăнса пăхкала пуçларĕ.
—Ку мĕн шыра пуçларĕши? тетпĕр, пĕлмесĕр, тĕлĕнсе.

— Акă çаккăнта епир хамăрăн пĕр аҫана пытарсаттăмăр. Ун çине çуклăхпа йывăç хĕресте лартаймарăмăр, терĕ.—Хĕрес лартаймарăмăр пулсанта пĕҫĕкçĕ аҫасем ăçта пулнĕ çĕрте епир, ваттисем, вилсенте унта пулас çук. Вĕсем Турă умĕнҫе пирĕштисем пулĕçĕ, терĕ те аҫине шеллесе пирĕн умрах, мĕскĕн,

куççуллипе йӗрсе илҫӗ. Вăл ватă пуçӗпе йӗн-
нине курсан, пирӗнте тепле кăмăл хуçăлнă
пек пулҫӗ, йӗрес те киле пуçларӗ пек.... Ҫа-
рăнсан, сăхсăхса илҫӗ те, виçӗ тапхăр пуçне
пӗшкӗртсе, тайăлса пуççапсан, каллех суллан-
са малалла ута пуçларӗ. Епир те ун хыçӗн-
ҫен утрăмăр: пӗтес çук хӗрессем хутлăхӗнҫен,
вилӗ тăприсем çинҫен, каçа-каçа кайса. Тата
çапла малалла утсан, хӗрессем те сайрала пуç-
ларӗç пек, уçланкă çӗре, çул çине, тухрăмăр.

— Акă пурсăмăрта епир вилсен çапла
масар çинҫе пулăпăр, пирӗн çийе те çапла
асăнмалăх хӗрессем-мӗнсем лартӗçӗ. Тупăкă-
мăрсем çӗрсен, пирӗн шăтăксем те çапла айа-
лалла ишӗле-ишӗле анăçӗ; хӗрессем çӗрсе
ӳкӗçӗ; хăшне вутта хутӗçӗ. Пирӗн çирен те
çапла, пирӗн пек курса çӳрекенсем, пирӗн пек
калаçса çӳрӗçӗ. Темиçе султан çак масар çийӗ
те тип-тикӗс çӗр пулӗ; хурантăсем ларта пу-
çлӗçӗ. Ӗлӗкхи масар çийӗсем тахçанхисем
халӗ паллă та мар, кӗсем те çапла пулӗçӗ,
тесетҫӗ. Ҫăнласахта çав старик ун ҫухне мӗн-
мӗн каласа панă сăмахсем пурте халӗ ҫăна
килҫӗç иккен....

Куратӑн авӑ, пӗр йапала та йулман. Ҭӑ-кӑл-ҭакӑл шӑтӑксем те тӗмескесем анҭах йулнӑ. Вӗсем те пулин малашне ҭас тикӗсленӗҫӗ. Масарӑн пӗр хӗррине авӑ хуралтӑсем те ҫуртсем те ларта пуҫланӑ. Тӑра-тӑра ытти тӗлӗсенете ҫапла тӗрлӗ хуралтӗсем мӗнсем лартса тухӑҫӗ. Ку масарӑн палли мӗнӗ те пулас ҫук. Пире хамӑра ун ҭухне тепӗр ҫӗре, ҫӗнӗ масар ҫине, леҫҫе ҭикӗҫӗ.... Вӗсем те малашне ҫаплах пулӗҫӗ. Тӗнҭенӗн мехелӗ ҫапла куран: вӗри пӗтнӗ ҫӗре тепӗри пулса тӑрат.

*Ив. Юркин.*

**И. Н. Юркин ҫырса кӑларнӑ кӗнекесем:**

1) Шӳтсем. . 5 пус.
2) Халлапсем. 5 „
3) Йумахсем . 5 „
4) Ваттисенӗн сӑмахӗсем . 5 „
5) Калаҫусем . 5 „
6) Хӑраман-скер . . . 15 пус.
7) Урине . . 15 „
8) Кулаҫа тӑранитӟен ҫитерви . . 25 „
9) Хулари кивӗ масар ҫинӟе. 30 „

Малтанхи пилӗк тӗрлӗ кӗнекесем сутӑнса пӗтнӗ, кайранхисем пӗр ҫӗршер кӗнеке сутӑнмасӑр йулнӑ. „Вӗреннӗ ҫынсем“ халӗ кӑна тухрӗҫӗ (5 пин кӗнеке). Пуштӑ урлӑ ҫырса илес текенсенӗн,ак ҫаксене пит хытӑ пӗлсе тӑрас пулат:

1) Малтан укҫа йаман ҫынсене, ыйтсан та кӗнекесем йамастӑпӑр.

2) Ҫырусем ҫумне маркӑ ҫыпӑҫтарса йаман ҫырусене пуштӑран илместӗпӗр.

3) Кӗнекесемшӗн укҫа йанӑ ӟухне кӗнекесем хакӗсенӟен пуҫне тата пуштӑ укҫине те икӗ кӗрепенкешӗн йарӑр.

4) Ыйтса илнӗ кӗнекесене ӑҫта йамаллине, хӑрӑн атӗрӗсре, ӟипертерех, паллӑрах ҫырса йарӑр: п. отд. йатне, хӑш кӗпӗрнине, уйасне, йалне, кам йатне йамаллине.

Ҫаккӑнта каланӑ пек, мӗн кирлине ҫырсан, йанӑ кӗнекесем ҫухалмаҫҫӗ.

Пустарма тытӑнтӑмӑр вунпӗрмӗш кӗнекене „Ака туӗ“. Ӟас тухӗ.

Кӗнекесем ҫырса-илес текенсене атӗрӗсӗм ак ҫапла: „г. Симбирск, площадь Марата (б. Ярмарочная) д. № 97 И. Н. Юркину“.

Совд мед